# ХАЛĂХА ХАЛАЛЛАНĂ ПУЛТАРУЛĂХ

## А. В. Асламас композитор 70 çул тултарчĕ



Эх, юрă, юрă! Мĕн кăна тумастăн пулĕ эсĕ этем чĕрипе? Пĕр-пĕрне чунчĕререн юратакан савнисене, тăванпĕтене, ĕçĕ-хĕлĕ ăннă, ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ ситнĕ çынсене тата ытларах савăнăç кÿретĕн, вăй-хал хушатăн.

Эй, асран тухми халăх юрри-кĕвви! Санра, чăнах та, темĕнле асамлă вăй пурах иккен. Эсĕ пурнăçра тĕрлĕ инкек-синкек тÿссе, хĕн-асапра хусăлса çĕре ÿкнисене ура çине тăма, сÿннĕ шанчăка çĕнĕрен чĕртсе яма, малалла хăюллăнрах утма, хаяр кĕрешÿре çĕнтерме вăй-хал хушатăн, пурăнан пурнăçа илемлĕрех те савăнăçлăрах тума пулăшатăн.

Эй, юрă-кĕвĕ тĕнчи! Санăн пуçламăшĕ те, вĕçĕ те çук. Эсĕ сут тĕнче пек ăслă, тулăх уй-хир пек пуян, пирĕн кулленхи пурнăç пек илемлĕ. Кĕскен каласан, юрă-кĕвĕ — халăх чунхавалĕ, халăх сасси, халăх кăмăлĕ.

Çакă çутă тĕнчере юрă-ташăсăр халăх çук. Çĕр çинчи кашни халăхăн пурнăç йăли-йĕркине, кăмăлне, ĕçĕ-хĕлне, тыткаларăшне тивĕçлĕ юррисем, кĕввисем, ташшисем пур.

Этемлĕх аталанăвĕн кирек хăш тапхăрĕнче те çынсем юрă-ташăсăр, кĕвĕ-çемĕсĕр пурăнман. Халăх юрри-ташшинче халăх характерĕ, кăмăлĕ, шухăш-ĕмĕчĕ уçăмлă курăнать.

Халăх юрри-кĕвви авалхи çынсем ушкăнăн-ушкăнăн пĕрлешсе пурăнма, пĕччен тăвайман йывăр ĕçсене йышпа пухăнса тума ăс-хакăл çитерсенех çуралнă.

Йăхсен, ушкăнсен, общинăсен пурнăçĕ аталаннă май, çынсен тăван тавралăха, сутă тĕнчене пĕлес-ăнланас шайĕ хăпарсах, вĕсен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ, йăли-йĕрки улшăнса-çĕнелсе пынă май, халăх юрри-ташши те улшăнса-çĕнелсе пынă: кивви манăçа тухнă, çĕнни çуралнă та малалла пурăнма тытăннă.

Кирек хăш тапхăрта та çынсем хăйсен пурнăçне савăнăçлăрах та илемлĕрех курасшăн, тăвасшăн пулнă. Çавăнпа хăйсен юррисемпе ташшисене янăравлăрах та илемлĕрех кĕвĕсем хушса çĕнетнĕ. Пуçаруллисем, хастаррисем юрланă юрăсем, ташланă ташăсем, халăх кăмăлне кайса, халăх асĕнче юлнă, паянхи куна çитиех упраннă. Мĕн тĕрлĕ юрă-кĕвĕ çук пулĕ чăваш халăх сăмахлăхĕнче? Чăнах, пуян пирĕн халăх юрă-кĕвĕрен, халап-юмахран. Çакна шута илсен, пирĕн халăхăн илемлĕ сăмах, юрă-кĕвĕ пултарулăхĕ виçесĕр пысăк.

Акă, сăмахран, халĕ пур чăваш та пĕлекен «Алран кайми аки-сухи...» юррах илер-ха. Чăваш халăх сăмахлăхĕнче унăн пиллĕк тĕрлĕ варианчĕ пуррине пĕлетпĕр. Халăх юррипе интересленекенсем унăн икĕ вариантне 1853 çулта С. М. Михайловпа В. П. Громов пухса кăларнă «Чувашские разговоры и сказки» кĕнекере курма пултараççĕ. Паллах, авалхи кашни варианчĕн кĕввине халĕ итлес пулсан, вĕсем кашнях расна е пĕр-пĕрне сывăхрах кĕвĕллĕ янăранă, илтĕнĕ пулĕччĕç. «Алран кайми аки-сухи...» халĕ пĕтĕм чăваш тĕнчи пĕлекен, юрлакан юррăн икĕ варианчĕн кĕввине С. М. Максимов пухса хатĕрленĕ, 1932 çулта пичетленсе тухнă «Тури чăвашсен» юррисем» кĕнекере те нота станĕ çине çырса кĕртнĕ. Çĕр ĕçлесе, выльăх ĕрчетсе пурăнакан халăх ĕмĕрех кĕрекере, сĕтел тавра ларсан, асран кайми тăван çĕрешыва, тулăх тырпула, хунавлă выльăхчĕрлĕхе ĕмĕтленсе, сывăх тăван-пĕтене, кÿрше-арша, ял-йыша ырă сунса, пĕрлешÿллĕ ĕçе мухтаса, пурнăç малашне те çапла çулпа аталанса каясса шанса, ĕненсе юрланă. Ĕмĕрхи ĕçпе ырă йăлайĕрке, юрă-кĕвĕ, пĕрлĕхлĕ вăй-хал малашне те пурнăç тĕрекĕпе илемлĕ пуласса çирĕп ĕненнĕ чăваш халăхĕ, чăваш çынни.

Чăваш халăхĕн юрă-кĕвĕ хайлас пултарулăхĕ виçесĕр пысăк, унăн çав традицийĕ халĕ те çирĕп.

Мĕн тĕрлĕ юрă-кĕвĕ çук пулĕ чăваш халăх сăмахлăхĕнче! Чăнах, пуян пирĕн халăх юрă-кĕвĕрен, халап-юмахран. Çакна шута илсен, пирĕн халăхăн пуласлăхĕ, унăн илемлĕ сăмах, юрă-кĕвĕ пултарулăхĕ виçесĕр пысăк. Чăваш наукăпа тĕпчев институчĕн фольклорпа литература уйрăмĕ 1973—1987 çулсенче «Чăваш халăх сăмахлăхĕн» ултă томне пичетлесе кăларса, тăван çырулă культурăшăн питех те пысăк ĕç турĕ. 3-мĕшпе 4-мĕш пысăк томĕсене чăваш халăхĕн тĕрлĕ жанрлă 1785 юррине пухса кĕртнĕ. Тĕп редакторĕ, паллă поэт тата тĕпчевçĕ Г. Ф. Юмарт каланă тăрăх, пирĕн халăх юрăкĕвĕрен, халап-юмахран пуянран та пуян. «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» ултăтомлăхра пирĕн пĕтĕм пуянлăхăн пĕчĕк пайĕ çеç кĕнĕ-ха. Архивсенчи, унта-кунта пичетленнĕ материал вунă хут та ытларах. Хамăр халăхăн 100 пин юрă тетпĕр пулсан, асăннă ултă тома çĕртен пĕр-икĕ пинĕ кăна кĕнĕ темелле. Латышсем иртнĕ ĕмĕртех 120 пине яхăн юрă пухса кăларнă. Çак ĕçе пĕр уйрăм çын хăй пурнăçне панă. Вăл Кришьян Барон. Эпир халлĕхе халăх юррисен мĕн пур пуянлăхне те шута илмен-ха», — тет Геннадий Федорович.

Эй, тăван чăваш халăхĕ, эсĕ аслă ăсчах, ĕçчен, пултаруллă, перекетлĕ,

илемлĕ юрă-кĕвĕ, юмах-халап ăсти. Мĕн тĕрлĕ юрă-кĕвĕ çук пуль санăн чун-хавалунта! Чăваш халăхĕн ĕмĕртен ĕмĕре пухăнса-упранса пыракан эткерĕнче мĕн тĕрлĕ паха юрă-ташă, кĕвĕ-çемĕ çук пулĕ. Унăн чун-хавалĕ тăван халăх историйĕн тĕрлĕ тапхăрĕнче тĕрлĕ çаврăннă: саманине, çулталăк вăхăтĕнчи уявĕсене кура, чăваш çынни хăйне май юрă-кĕвĕ хайланă, хăйĕн кулленхи пурнăçне илемлĕрех курасшăн, тăвасшăн пулнă мар-и? Лăпкă та ырă самантсенче вăл савăннă, юрланă, ташланă; йывăр çухату пулсан, хĕн-асап килсен, вăл хурланса юрланă, çавна май юрри-кĕвви те хурлăхлăн, тунсăхлăн илтĕннĕ. Çапла пуçарнă чăваш хăйĕн хуйхи-суйхине. Анчах çав-çавах чăваш халăхĕ малашлăха ĕмĕтленнĕ, малаллах пăхнă, малаллах утнă.

Халăх ăс-тăнĕ анлă та тарăн шухăшлă. Пирĕн сĕм авалах çырулăх пулнă пулсан, эпир тăван халăхăн кун-çулне тĕплĕнрех те тарăнрах курма пултарнă пулăттăмăр. Çапах та пирĕн халăх асĕнче вăтам ĕмĕрсенчи — Атăлçи Пăлхар, Ылтăн урта тапхăрĕнчи юрăсемпе халапсен татăк-кĕсĕк тĕслĕхĕсем юлнишĕн те эпир кăмăллă-ха.

Юрă-кĕвĕ те авалтанпах уйрăм çын е ушкăн ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăнса çуралнă, аталаннă. Юрă-кĕвĕ халăх шухăш-кăмăлне, ĕмĕтне палăртать пулсан, вăл халăхра хăвăрт сарăлать, пурăнма тытăнать, ламран лама каять, чăн-чăн халăх юрри-кĕвви пулса тăрать, халăх чĕринче юлса, хăйĕн ĕмĕрне малалла тăсать.

Чăваш халăх юррисене пухасси, тĕпчесси XIX ĕмĕрĕн 30—40-мĕш çулĕсенче çеç пуçланнă-ха. Вырăс мар халăхсен культурипе интересленекенсен вырăс писателĕсем, этнографĕсем А. А. Фукс, В. А. Сбоев, Д. И. Ознобишен, венгр çулçӳревçисем А. Регули, Д. Мессарош тата финн çулçӳревçисем М. Кастрен, А. Альквист, Х. Паасонен чăваш халăх сăмахлăхне пухас-тĕпчес ĕç пуçламăшĕнче тăнă тесен те йăнăш пулас çук.

Хамăр халăх хушшинчен тухнă малтанхи фольклористсем тăван халăха, чĕлхене, ырă йăла-йĕркене юратса тунă пархатарлă ĕçсене те асран ямалла мар. Вĕсен шутĕнче эпир Чăваш Хвети поэтран пуçласа малтанхи ятлă-сумлă чăваш писательне тата историкне С. М. Михайлова, чăваш чĕлхин паллă тĕпчевçине Н. И. Золотницкие, В. П. Громов, Н. Е. Ефимов, К. К. Прокопьев священниксене, Н. М. Охотниковпа И. Н. Юркин, Г. Т. Тимофеев этнографсене тата писательсене куратпăр.

Çапах та, чăваш халăх юрри-кĕввине чи малтан хут çине çырса илекенĕсем камсем пулнă-ха? Камсене илĕртнĕ-ха чи малтан чăваш халăх юррисен асамлă кĕввисем? Эпĕ тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, чăваш халăх юррипе ташшин кĕввисене чи малтан XIX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулсен вĕçĕнче Хусанта тăракан çуран çар чаçĕн капельмейстерĕ Н. Дмитриев нота станĕ çине куçарса çырни паллă.

Н. Дмитриев çырса илнĕ пĕр юррин кĕвви — хăна-вĕрле пухăнсан юрлакан кĕреке юрри, тепри — шăпăрпа каланă ташă кĕвви иккен. Ку кĕвĕсене вăл А. Ф. Риттих полковник çырнă, 1870 çулта Хусанта пичетлесе кăларнă «Материалы по этнографии России. Казанская губерния» кĕнекене хушса кĕртнĕ.

Н. Дмитриев капельмейстер хыççăн чăваш халăх юррисемпе ташшисен кĕввисене нота станĕ çине куçарса çыраканĕ Н. Е. Ефимов (1856—1918) учитель тата этнограф (вăл хальхи Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьел ялĕнче çуралнă. — А. А.) пулнă. Вăл 1888 çулта Хусанта чăваш халăхĕн ĕçкĕ-çикĕ, туй, салтак, вăйă юррисен самаях пысăк алçырăвне хатĕрленĕ, чылай юррисен кĕввисене нота станĕ çине куçарса çырнă. Н. Е. Ефимов — халăх юррисен кĕввисене çыракан чи малтанхи чăваш. Халĕ çав алçыру Хусан университечĕн Н. И. Лобачевский ячĕпе хисепленекен наука библиотекин фондĕнче упранать-ха. Ăна пичетлесе кăларса тăван халăха тавăрса пама та тахçанах вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. XIX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче чăваш халăх юррисен кĕввисене нота станĕ çине çырас тĕлĕшпе вырăс этнографĕ В. Мошков пысăк ĕç тунă. Вăл Варшава округĕнчи çар службинче тăракан чăваш салтакĕсенчен халăх юррисен 75 кĕввине çырса илсе, вĕсене 1893 çулта Хусан университечĕ кăларса тăнă «Известия общества археологии, истории и этнографии» журналăн виçĕ кăларăмĕнче кăларнă, чăваш халăх юрри-кĕвви çинчен пĕтĕм Европăна илтĕнмелле ырă хыпар çитернĕ.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш халăх юррисен кĕввисене нота станĕ çырса илес, уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларас пархатарлă ĕçе чăвашран тухнă малтанхи композиторсем хăйсем тытăннă. Кунта уйрăмах Чĕмпĕр чăваш шкулĕн тата музыка учителĕсен — А. П. Петров-Турингe, И. М. Дмитриев, Р. Идабаев, Ф. П. Павлов, С. М. Максимов, П. В. Пазухин, Г. Г. Лисков композиторсен тава тивĕçлĕ ĕçĕ-хĕлне асăнмалла.

Аслă И. Я. Яковлев вĕрентекенĕмĕр тăрăшнипе 1908 тата 1912 çулсенче чăваш халăх юррисен «Образцы мотивов народных песен и тексты к ним» ятлă икĕ кĕнекине пичетлесе кăларнă. Тăван халăха ырă малашлăх сунса ĕçленĕ А. Т. Терентьев учитель 1912 çул тĕлнех хальхи Саратов тата Пенза облаçĕнчи чăвашсен юррисемпе кĕввисен пысăк алçырăвне хатĕрленĕ пулнă, анчах ăна вăл пичетлесе кăларма ĕлкĕреймен, халĕ вăл Санкт-Петербургри пĕр архивра алçыру халлĕнех упранать. Ăна та Шупашкарта пичетлесе кăларма тахçанах вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Çапла чăваш халăх юррисемпе кĕввисене çырса пухнă алçырусем Раççейри архивсемпе библиотекăсенче, Европăри çĕршывсен наука тата музыка центрĕсенче, уйрăмах финн, венгр, нимĕç, француз фольклорисчĕсен, этнографĕсен архивĕсенче чылай.

Халăх юрри-кĕввисене пухса, халăха тавăрса парас тĕлĕшрен пирĕн хальхи вăхăтри музыковедсем те пысăк ĕç тăваççĕ. Акă, сăмахран, Ю. А. Илюхин 1969 çулта паллă чăваш халăх юрăçи — Гаврил Федоровра юрра 620 юрра типтерлĕн пухса кăларса пысăк ĕç турĕ. Унтан А. А. Осипов музыковед 1981 çулта Ираида Вдовина юрлакан халăх юррисен пысăк пуххине кăларчĕ. Хальхи вăхăтри паллă музыковед М. Г. Кондратьев 1981—1982 çулсенче анатри чăвашсен юррисемпе кĕввисен пуххин икĕ пысăк кĕнекине хатĕрлесе кăларчĕ. Чăнах, талантлă пирĕн халăх, пуян юрă-кĕверĕн. Ахальтенех каламан пулĕ халăхра: пирĕн халăхăн çĕр пин сăмах, çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ пур тенĕ. Вĕсем пурте пирĕн пурнăç пархатарĕ, пирĕн халăхăн тĕнче умне тухмалли, тĕнче умĕнче курăнмалли чĕрĕ илем.

Чăваш халăх юррисен малашлăхĕ, шăпи пирĕн хальхи композиторсен пултарулăхĕнчен те нумай килет. Паллă, ятлă-сумлă музыка ĕçченĕсем хăйсен пултарулăхĕнче халăх юрри-кĕввипе анлă усă курнă, халăх юррисене тирпейлĕн гармонизацилесе, илемлĕрех те янăравлăрах кĕвĕллĕ туса, каллех халăха тавăрса панă, вĕсен ĕмĕрне малалла тăснă. Çак тĕлĕшрен уйрăмах пирĕн аслă ӳсĕмри композиторсем Ф. П. Павлов, С. М. Максимов, В. П. Воробьев, Г. Г. Лисков, А. Н. Тогаев, Ф. М. Лукин, Г. Я. Хирбю, Г. С. Лебедев, А. М. Токарев, В. А. Ходяшев, Ф. С. Васильев, Т. И. Фандеев, А. В. Асламас нумай ĕçленĕ. Вĕсем кашниех чăваш халăх юррисене типтерлĕн илемлетсе, янăравлăрах та витĕмлĕрех кĕвĕллĕ туса, халăха тавăрса панă.

* * *

Анисим Асламас — аслă ӳсĕмри тата хальхи вăхăтри пултаруллă та нумай енлĕ паллă чăваш композиторĕсенчен пĕри. Çак кунсенче вăл 70 çул тултарчĕ, юрă-кĕвĕ хайлама пуçланăранпа 57 çул çитрĕ.

Анисим Васильевич Раççей тата Чăваш Республикин искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Вăл 1924 çулхи утă уйăхĕн 24-мĕшĕнче Етĕрне районĕнчи Вăрманкас Асламас ятлă ялта хресчен çемйинче çуралнă. Тăван ялти тулли мар вăтам шкултан вĕренсе тухнă вунвиçĕ çулхи çамрăк Унисĕм купăсса 1937 çулта Шупашкарти Чăваш музыка училищин хатĕрленӳ уйрăмне вĕренме илнĕ. Кунта вăл 1941 çулхи юпа уйăхĕччен вĕреннĕ. Вăрçă инкекне пула училищĕне вăхăтлăх хупсан, Унисĕм çара кайиччен тăван колхозра учетчикра ĕçленĕ. 1942 çулхи кĕркунне çитсен, пулас паллă композитора Тăван çĕршыва нимĕç фашисчĕсенчен хӳтĕлеме Хĕрлĕ Çара илеççĕ. Алла пăшал тытса, вăл 1945 çулччен хаяр çапăçусенче пулать, Брянск, Орел, Белоруссии, Хĕвелтухăç Пруссии, Польша, Германи çĕрĕсене нимĕç фашисчĕсен пусмăрĕнчен хăтарассишĕн А. Горбатов генерал ертсе пынă 3-мĕш арми йышĕнче çапăçать, çар чаçĕсем хушшинчи çыхăнушăн ответлă ĕçсенче пулать. Хут купăс калама ăста салтака кунта та часах асăрханă: ăна полк оркестрне илеççĕ.

Паттăр салтак «Берлина илнишĕн» медаль илме тивĕçнĕ. Юнлă вăрçăн асар-писер çулĕпе утма тивнĕ пулин те, Анисим Васильевич тăван юрă-кĕвĕ çинчен шухăшламасăр, ĕмĕтленмесĕр пурăнма пултарайман. Акă кĕтнĕ вăхăт çитнĕ. Вăрçă чарăннă. Германие парăнтарнă. Тăнăç пурнăç пуçланнă.

Вăрçă чарăнсанах, Анисим Васильевич та тăван енне, асран кайми Вăрманкас Асламаса таврăнать, малашнехи пурнăçа мĕнлерех йĕркелемелли çинчен шухăшлать: мĕн тумалла, вĕренме ăçта каймалла?

1945—1948 çулсенче вăл Ленин орденлĕ Киев консерваторийĕн музыка теорийĕпе композици факультетне вĕренме кайса кĕрет. Кунта вăл Б. Н. Лятошинский класĕнче вĕренет, музыка теорийĕпе паллашать, юрă-кĕвĕ хайлас ăсталăха алла илме тăрăшать. Анчах вăрçа пула çакланнă чирĕ ăна малалла вĕренме чărмантарать. Вăл 1948 çулта консерваторире вĕренме пăрахсах Шупашкара таврăнать: пĕр вăхăт хулари музыка училищинче тата Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче студентсене музыка теорийĕ вĕрентет, çамрăксен театрĕнче тăрăшать.

Юрă-кĕвĕ тĕнчине чунтан-чĕререн парăннă Анисим Васильевич 1955—1960 çулсенче икĕ хутчен Ленин орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă. Мускав консерваторийĕнче паллă музыкçăсен — В. Г. Фере, М. П. Раков тата С. С. Богатырева профессорсен класĕнче вĕренет, тăрăшсах композици, инструментовка тата полифони ăсталăхне тимлет. Консерваторире вĕреннĕ çулсенчех Анисим Васильевич хăйĕн таланчĕпе тата пултарулăхĕпе палăрнă, вăл И. А. Римский-Корсаков ячĕллĕ стипенди илсе тăнă.

Мускав консерваторийĕнчен вĕренсе тухсан, Анисим Васильевич Шупашкара таврăнать, Чăваш патшалăх драма театрĕнче, педагогика институчĕпе музыка училищинче студентсене музыка теорийĕ тата юрă-кĕвĕ хайлама вĕрентет.

Чăваш халăх юрри-кĕввине чунтан-

чĕререн паранлă Анисим Васильевич 1961 çултан пуçласа мĕн паянхи кунчченех тăван халăхăн музыка искусствине, юрă-кĕвĕ пултарулăхне аталантарассишĕн тăрăшать. Вăл 1952 çултанпа Раççей композиторĕсен Союзĕн членĕ, ăна Чăваш Республикин тата Раççей искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ хисеплĕ ят панă, вăрçă çулĕсенчи паттăрлăхпа мирлĕ пурнăçри хастарлăхшăн вăл тăхăр медальпе Хисеп грамотисем илме тивĕçлĕ пулнă.

Анисим Васильевичăн творчествăри ĕçĕ-хĕлĕ нумай енлĕ: вăл оперăсен, инструментсемпе каламалли произведенисен, ораторисемпе хорсен, романссемпе халăх юратакан илемлĕ юрăсен, чăваш халăх юрри-кĕвви çинче никĕсленĕ пĕрремĕш рапсодийĕпе оратори авторĕ.

Хăйĕн пултарулăхĕнчи малтанхи произведенисем çинчен сăмах хускатсан, композитор 1937 çултах çырнă «Надя юррине» аса илет. Каярахпа чăваш космонавчĕ А. Г. Николаев тĕнче уçлăхне вĕçсе тавраннă хыççăн П. Н. Осипов драматург либретти тăрăх çырнă «Шуршăл тăхлачи» шўтлĕ оперăра усă курнă иккен. «Хама та кăмăла каякан, халăх та халĕ юратсах юрлакан çак юрра М. Данилов-Чалдунăн «Сарă хĕр» ятлă сăввине тĕпе хурса çырнăччĕ. Çирĕм пиллĕк çул иртсен эпĕ ăна «Шуршăл тăхлачи» оперăри Надя юррийĕ туса хутăм. Тăван халăх та кăмăлласа йышăнчĕ ăна: радио та ăна час-часах итлеттерет, концертсенче те час-часах янăрать», — тет Анисим Васильевич

Композиторăн мĕн пур еткерне пухса тишкерес пулсан, унăн пултарулăхĕ, чăнах та, нумай енлĕ пулни курăнать. Çапах та эпир Анисим Васильевич çырнă-хайланă музыка, юрă-кĕвĕ произведенийĕсене тăватă тĕрлĕ жанрлă ушкăна уйăрса тишкерсен, туллирех те пайăрлăрах курăнать, унăн пултарулăхĕпе таланчĕ ўсĕм çулĕпе аталанса пыни уçăмлăрах палăрать.

Пĕрремĕшĕнчен, Анисим Асламас хăйĕн пултарулăхĕнче чăваш поэчĕсен сăввисене, тăван халăхăн юрă-кĕвĕ хайлас традицине асра тытса, илемлĕ те янăравлă, чун-чĕрене, кăмăлне çывăх, пĕрре илтсех юрласа ямалла кĕвĕллĕ юрă хывма пултарнипе паллă. Унăн чăваш поэчĕсен сăввисене чун-чĕрене çĕклентермелле кĕвве хывнă юрăсен çўпçи вара туллирен те тулли. Вăл Петĕр Хусанкайăн «Пирĕн ял хĕрĕ», Ухсай Яккăвĕн «Чăп-чăпар куккук», Иван Саламбекăн «Куккук авăтать», Стихван Шавлин «Хурçă кĕпер», Митта Ваçлейĕн «Эй, тусăм Тимахви», Ваçлей Давыдов-Анатрин «Атăл тăрăх утрăм», «Чĕвĕл чĕкеçсем» тата «Чупрăм тухрăм кўлĕ хĕррине», Аркадий Ĕсхĕлĕн «Эх, юрла, тăван!», Валентин Урташăн «Сĕрме купăс», Георгий Ефимовăн «Чăваш вальсĕ», Александр Алкан «Шупашкар çăкисем», Георгий Орловăн «Шурă хурăн», Мария Волкован «Урхамахăм, çилçунат», тата «Астăватăп», Аркадий Маловăн «Çамрăксен вальсĕ», Гурий Чаржовăн «Ял-йыш пулсан» тата «Атăл урлă эпĕ каçрăм» тата ытти чылай сăвăçсен сăввисене, çепĕç кĕвĕллĕ юрра хывса, вăрăм ĕмĕрлĕ турĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, Анисим Асламас аслăрах ўсĕмри ытти чăваш композиторĕсенчен пысăк жанрлă музыка произведенийĕсем çырнипе палăрса тăрать. Вăл вунă опера авторĕ. Паллăраххисен шутĕнче — Петр Осиповăн «Айтар» драми, «Тăван çĕршывра» тата «Шуршăл тăхлачи» пьесисем тăрăх вырăсла çырнă «Священная дубрава» (1961), «Прерванный вальс» (1962), «Евчĕ» (1977), Александр Артемьевăн «Салампи» повеçĕ тăрăх çырнă «Вера Сарьялова» (1970), «Çеçпĕл» (1965) оперисем. Çавăн пекех Николай Айзманăн «Хĕвеллĕ кун» (1969) пьеси тăрăх çырнă музыкăллă комедине тата хамăр ентеше, тĕнчипе паллă Надежда Павлова балеринăна халалласа çырнă «Нарспипе Сетнер» балета палăртмалла.

Виççĕмĕшĕнчен, Анисим Асламас оркестрта тĕрлĕ инструментсемпе (сĕрме купăс, флейта, гобой, фортепьяно, кларнет тата чĕлĕхлĕ инструментсем) калама çырнă питех те илемлĕ, чуна-кăмăла хумхантармалла кĕвĕллĕ произведенисем, пĕччен тата хорпа юрламалли произведенисем нумай çырнă. Вĕсенчен паллăраххисем «В. И. Ленин» (сăмахĕсем С. Шавлин), «Тăван çĕршыв çинчен хывнă поэма» (сăмахĕсем И. Тукташăн), «Чăваш çĕршывĕ» (сăмахĕсем Ю. Сементерĕн), «Ĕçпе юрă уявĕ» (сăмахĕсем чăваш поэчĕсен), «Сталинград çинчен хунă баллада» (сăмахĕсем В. Давыдов-Анатрин) ораторисем тата симфони оркестрĕ валли чăваш темипе çырнă висĕ фантази (1947), Петĕр Хусанкайăн «Тилли юррисем» вокалпа симфони поэми, «Сетиерпе Пинерпи» увертюра т. ыт. те палăртмалла. Вĕсен хушшинче вара уйрăмах авторĕ висĕ хутчен (1952, 1957, 1972 çулсенче) çĕнĕрен редакцилесе, хушса, тўрлетнĕ тата илемлетнĕ «Чăваш рапсодийĕ» произведение асăнмалла. Тĕлĕнмелле хăватлă та илемлĕ, кăмăла çĕклентермелле янăрать вăл фортепьянăпа оркестрăн чĕрене тыткăнлакан хăватлă кĕввинче, итлекенсене тарăн шухăша ярать. Ăна композитор чăваш музыка искусствин классикне — Геннадий Воробьева халалланă.

Çавăн пекех Анисим Асламасăн чăваш халăх юрри-кĕввисен темипе камерлă оркестр валли çырнă «Асаттесен юррисем» поэмине те палăртса хăвармалла. Çак произведение композитор гобой валли, оркестрта калама çырнă. Гобойпа ăна чи малтан Раççей тата Чăваш Республикин халăх артисчĕ Анатолий Любимов питех те ăста каларĕ. Радиопа панă чух та, оркестрпа пĕрле каланă чух та «Асаттесен юррисем» поэмăна итлес килнĕçем итлес килет, тарăн шухăша ярать, тăван халăхăн аваллăхри пурнăç юррисемпе кĕввисен темисене аса илетĕн. Тапхăртапхăр çĕкленўллĕн те мăнаçлăн, хавассăн, çепĕççĕн, хушăран салхуллăн та пусăрăнчăклăн, тунсăхлăн янăраççĕ гобойпа оркестрти ытти тĕрлĕ инструментсен чуна пырса тивекен кĕввисем. Унтах ĕç-хĕл, туй-çуй, çулталăкăн тĕрлĕ тапхăрĕнчи уяв юррисемпе кĕввисен темисем, майĕпен вăй илсе, аталанса пыраççĕ. Çав-çавах вĕсене тĕп тема — чăваш çĕр ĕçченĕсен гимнĕ — «Алран кайми аки-сухи...» юррăн хăватлă кĕвви пĕрлештерсе тăрать, ертсе пырать. Уйрăмах Анатолий Любимов гобойпа калани поэмăна илем те витĕм кўрет.

Тăваттăмĕшĕнчен, Анисим Асламас — чăваш халăх юрри-кĕввине илемлетме, ăна янравлăрах та уçăмлăрах илтĕнмелле йĕркелеме пултаракан чăн-чăн ăста. Вăл чылайранпа ĕнтĕ тăван халăхăн ахахмерчен юрри-кĕввине типтерлĕн, унăн тĕп кĕввине, формипе шухăшне пăсмасăр, халăх чун-чĕрин кăмăлне упраса хăварма тăрăшса илемлетме ăста. Кутĕлĕшрен хальхи çамрăк чăваш композиторĕсен Анисим Асламасран вĕренмелли нумай: вĕсем хăш-пĕр чух халăх юррисен сăвви-кĕввинех хăйсем çырнă пек, хăйсемех кĕвве хывнă пек кăтартни, талантлă халăх пултарулăхне хисеплеменни, çаратни тăван музыкăна юратакансене хытах пăшăрхантарать кăна мар, тарăхтарать те.

Анисим Асламас çĕре яхăн чăваш халăх юрри-кĕввине илемлетнĕ. Вĕсенчен чи паллисем, халăх юратса йышăннисем — «Пушнар юррисем» ярăм, «Аслă улăхра ик куккук», «Кайум та, кайум, кайури», «Колхоз такмакĕсем», «Хура чĕкеç пулам-и?» т. ыт. те.

Композитор Никифор Ваçанкка, Нестĕр Янкас, Иван Ивник, Уйăп Мишши, Николай Евстафьев, Николай Сантров, В. Харитонов, Ю. Айдаш, А. Дмитриев, А. Лукашин, В. Чаплина сăввисене тĕпе хурса романссем те чылай çырнă.

Анисим Асламасăн юрă-кĕвĕ кĕнекисем те самаях нумай. «Çамрăклăх» (1959), «Савăнăç юррисем» (1961). «Мир — пурнăçа» (1965), «Шупашкар çыранĕнче» (1970), «Чувашские народные песни» (Москва, 1974), «Савнă çĕр, чăваш çĕршывĕ» (1975), «Хоры» (Москва, 1975), «Тăван ялта» (1981), «Чăваш кĕввисем» (1994) т. ыт. те.

Статья вĕçĕнче çапла калас шухăшăм пур: Анисим Асламас, чăнах, пултаруллă та талантлă, нумай енлĕ те тухăçлă ĕçлекен композитор. Халĕ унăн çыру сĕтелĕ çинче çĕнĕ оперăсемпе балетсем, ораторисемпе романссем, юрăсен партитурисем выртаççĕ. «Хамăн 70 çулхи юбилее тивĕçлĕ кĕтсе илес ĕмĕтпе «Иван Яковлев» тата «Спиридон Михайлов» оперăсем çырма материалсем пухрăм, хăш-пĕр арисен, юрăсен, хорсен, ташăсен партитурисене çырса та хунă ĕнтĕ», — тет Анисим Васильевич.

Çапла, хĕрў ĕçпе паллă тăвать хăйĕн çитмĕл çулхи юбилейне чăваш халăхĕн юратнă композиторĕ, илемлĕ юрă-кĕвĕ ăсти. Эппин, эпир те, «Тăван Атăл» журнал редакцийĕнче ĕçлекенсем, Анисим Асламаса, унăн нумай енлĕ талантне сума сăвакансемпе пĕр канашлă пулса, тăван халăх музыка искусствине аталантарма 60 çул вăй хунă, ятлă-сумлă ĕçчене çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми хавхалану сунатпăр. Ĕçў-хĕлў ăнса пытăр, ĕмĕтўсем çитсех тăччăр, Вăрманкас Асламасри пултаруллă кил-йышра çуралса ўснĕ, чăваш музыка тĕнчин тўпине çитнĕ, хаклă Унисĕм Асламас!

Андрей АЛЕКСЕЕВ